


А. Т. ТРОФИМОВ.

# БУКВАРЬ

ЧАВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1939

































# А Н

## А Н









# НА







# А а

ан

на

Ан–на

Анна

а






# У у



## Ну!

## Ну—ну!



ун

ну







# А—у!



Ау, ау.

У-а, у-а.

*а у ау уа уа*



# Ух, ух! Хх

ух | ха

ах | ух

у х

*х х х ах ух*

# Рр



хур

хур



| | |
|---|---|
| хур | ху-ран |
| ху-ра | ху-ра |
| ху-ран | у-ра |





# Мм

ар-ман

арман

хум

у-рам

урам



Арман

Ан ман.

Ар-ма-на ан.

*М*

*л л м арман*

# К к





рак — кур
ку-рак — кун

ку-ку
куку



Ак ку-рак.
Ку ху-ра ку-рак.
Ху-ра ку-рак.
Ку-рак кур.








# Тт

та-ка　　ту-рат
така　　турат

ту-та | ту́-рат | хут
ту-ра | турт | хурт

Ху-ра та-ка.
Та-ка кар-та-ра.

ту-та | та-ка
ту-на | та-кан
тур-та | кар-та






# П п



пу-кан
пукан

хуп

хап-ха
хапха

Хап-ха па-ха.

Хап-ха хуп.



| | |
|---|---|
| пу-ху | а-пат |
| пу-ра | ка-пан |
| ур-па | па-так |








# Сс

ка-рас су-хан кас

карас сухан сас

Ак карас.
Карас кас.
Сахар, сухан пух.
Мана сухан пар.

| | | |
|---|---|---|
| су-ха | ка-су | ка-рас |
| су-хан | пу-су | ка-сас |





# Ыы



ых-ра
ы-ран

## хыр

Тарас, хыр кас.
Ура сыр.
Армана пыр.
Ыран ыхра пух.

| | | |
|---|---|---|
| хыр | тыт | тат |
| пыр | сыр | кат |








ы-раш ша-па
ыраш шапа

# Шш

Ку ыраш.
Таса ыраш.
Таса ыраш акар.



| | |
|---|---|
| ку-шак | каш-та |
| кур-шак | пак-ша |

ш Ш

ш ыраш




шкул ул-ма

пыл

ла-ша кал-та

# Л л

**Шкул таса.**

**Анна шкулта.**

**Сашук шкулта.**

**Тараста шкулта.**

**Анна, мала лар.**

**Раман, вула.**

*Л л*

*Сашук шкулта.*

| | | |
|---|---|---|
| ул-ма | пыл | шал-та |
| сал-ма | кул | тул-та |
| са-лам | ху-ла | лут-ра |



Ла́ша акара.
Ула лаша акара.
Хура лаша та акара.
Ла́шана апат пар.

Л

Л л Л Лука.



## Арман.

Ак арман.
Армана ыраш антар.
Ыраш сахал мар.
Ыраша алама ан ман.
Аласан ыраш таса.

ар — ман
лар — ман

А

А Анна.



# Ăă



пу-лă — пулă

ă-са

а-тă — атă

Тарас пулă тытнă.
Пулă пысăк пулнă.
Аран туртса кăларнă.
Лука ăна пулăшнă.

| | | |
|---|---|---|
| у-тă | шă-на | су-рăх |
| ты-рă | хă-на | ту-рăх |
| ты-лă | хă-ма | ку-рăк |






Сашук пăшал тунă.

Ак пăшал.



## Раман.



Раман урама тухнă.

Урана атă тăхăннă.

Раман шăнман.

Анна, сăхман тăхăн.

Сăхман ăшă.

| | | | |
|---|---|---|---|
| | лă | пу | |
| су | рăх | су | лă |
| | хал | ху | |

*Анна шăнман.*

# В в



шыв
лав
вăр-ман

## Вăрман.

Вăрман аслă. Вăрманта хурăн, ăвăс сахал мар. Унта хурама та пур.

| | |
|---|---|
| сă-вă | вак |
| са-ва | кă-вак |
| са-вăл | кă-вар |

*в В*

*Шыв тăрă.*

# Павăл.

Павăл сывмар выртнă.

Павăла пăхма тухтăр пынă.

Тухтăр ăна урама тухма хушман. Павăл тухман.

Павăл сывалнă.

---



Шăла таса тыт.

Аллуна, уруна та таса тыт.

Шăла таса тыт.



шă-ши

# И и

**И-ван**

**Иван**

## Кушакпа шăши.

Кушак шăп выртнă.
Шăши ăна курса савăнса ларнă.
Кушак тăнă та ăна тытнă.

| | |
|---|---|
| хир | ир |
| вир | иш |
| пир | кил |








## Иванпа Марук.

Марук кушак.
Иван шăши.
Кушакăн шăши тытмалла.
Шăшин кушакран тармалла.
Марук Ивана кап! тытнă.

И

*Иванпа Марук.*

# Ее





се-хет

сехет

пу-ка-не

ат-те

ан-не

**Лисукăн пукане пулнă.**

**Пукани хитре пулнă.**

**Лисук ăна аван пăхнă.**

**Таса тумтир туса панă.**

| | | |
|---|---|---|
| ви-те | пар-не | хир-те |
| вит-ре | сер-те | хит-ре |

*е Е*

*Атте. Анне.*





**Е-ле-на пи-леш**
**Елена пилеш**

| | | |
|---|---|---|
| Е-ле-на | еп-ле | и-лем |
| Ле-на | е-ри-пе | ки-лем |

Елена сăвă калана.
Ира ăна итлесе ларнă.
— Елена, ан васка. Ерипе вула.
Елена ерипе вуланă.
Елена аван вуланă.

*Е е Е Елена сăвă калана.*

# Çç





çăл-тăр　　кус　　çур-ла
çăлтăр　　　　　　çурла

## Çурлапа мăлатук.

Хутран çурлапа мăлатук турăмăр. Тата çăлтăр касса кăлартăмăр. Çурлапа мăлатука класа çапса хутăмăр.

| | | |
|---|---|---|
| ça-ва | çу-на | куç |
| ça-ран | çă-нăх | пуç |
| ça-нă | çă-мах | лаç |






| | | |
|---|---|---|
| пу-сă | шăл | кас |
| пу-шă | çăл | каç |
| ă-вăс | сыр | сак |
| ы-вăç | çыр | çак |



## Уçăп.

Канмалли кун пулнă. Уçăп пăшалпа вăрмана уттарнă. Унпа Хураçка пынă.

Уçăп ăсан курнă. Хураçка малта пынă. Ăсан унтан хăраса тарнă. Уçăп киле пушах таврăннă.

*Уçăп ăсан курнă.*



# Ĕĕ

ĕ-не
сĕ-лĕ
пĕ-кĕ

## Ĕ н е.

Пирĕн хĕрлĕ ĕне пур. Вăл питĕ сĕтлĕ. Пире анне кашни кунах сĕт çитерет.

Сĕтрен турăх та тăватпăр.

| | | |
|---|---|---|
| ти-лĕ | сĕ-лĕ | ĕ-лĕк |
| ки-лĕ | çĕ-çĕ | çĕ-лĕк |
| тĕ-рĕ | сĕ-тел | çе-рем |
| çĕ-рĕ | çĕ-мел | сĕ-рĕм |

*ĕ*

*Сĕтлĕ ĕне.*

# Чч





чăх-сем ха-чă

| | | |
|---|---|---|
| чă-рăш | ча-как | чĕ-лĕ |
| чă-лан | ча-на | чĕл-хе |
| чус-та | чĕ-кеç | чĕ-ре |
| ха-чă | ка-ча-ка | чĕр-не |

## Ч ĕ к е ç.



Чĕкеç, чĕкеç, чĕкеçĕм,
ларса канма пĕлмерĕн,
кунĕпе апат пуçтартăн,
ачусене çитертĕн.





# Ээ



э-реш-мен
эрешмен

| | | |
|---|---|---|
| э-пĕ | э-пир | э-тем |
| э-сĕ | э-сир | э-мел |

**Шăнапа эрешмен.**

Эрешмен пĕрене хушăкĕнче пытанса ларнă. Пĕр шăна вĕçсе пынă та пĕрене çине ларнă. Унччен те пулман, эрешменĕ сикнĕ тухнă. Шăна вĕçсе тарнă.

Эрешмен шăнана кăштах тытай-ман.

| | |
|---|---|
| э-пĕ | еп-ле |
| эр-не | е-ри-пе |

Э

*Шăнапа эрешмен.*

# Автан.



Автан хура ураллӑ, хӗрлӗ ҫӗлӗклӗ, куҫӗсем сиксе тухас пек, сӑмси кукӑр.

Пӗрре эпӗ ун патӗнчен иртсе пыратӑп. Вӑл ҫуначӗсемпе ҫапрӗ те ҫӑварне карса: ки-ки-рик! терӗ.

## Автан тус.

**Автан тус, автан тус!**
**Хӗрлӗ ҫӗлӗк, ҫуллӑ пуҫ.**
**Мӗншӗн ытла ир тӑратӑн?**
**Мӗншӗн хытӑ кӑшкӑратӑн?**
**Мана ирех вӑрататӑн.**

# Йй

йы-тă | уй
йытă | пай



| | | |
|---|---|---|
| ка-йăк | йыш | вă-йă |
| хă-йăр | йă-мăк | вăй |

**Кашнин хăйĕн ĕç.**

— Улай, вула-ха, çак кĕнеке çинче мĕн çырнă?



Йытă кĕнекене шăршларĕ те уттара пачĕ.

— Ман ĕç мар вăл кĕнекĕ вуласси.

Эпĕ кил-çурт сыхлатăп, çĕрĕпе çывăрмастăп, вĕретĕп, вăрăсене, кашкăрсене хăрататăп, тет.

*й Й*

*Улай ăсла йытă.*

# Яя



я-лав

| | | |
|---|---|---|
| ял | яр | яв |
| ят | ха-яр | у-яв |
| я-нах | хă-яр | ту-я |

## **Якурпа кăсăя.**

Якур кăсăя тытнă. Вăл ăна класа илсе пычĕ. Ачасем пурте пыра-пыра пăхрĕç.

Кăсăяна эпир читлĕхе хупрăмăр. Эпир ăна апат паратпăр.

Çуркунне çитсен кăсăяна ирĕке кăларса яратпăр.

*Я я*

*Якур кăсăя тытнă.*



| | |
|---|---|
| **яс-ли** | **ня-ня** |
| **ясли** | **няня** |

| | |
|---|---|
| Ва-ля | Ва-ся |
| Ва-ня | Ва-ря |

## В а л я.

Валя пĕчĕк ача. Ирхине ăна амăшĕ яслĕне леçет. Яслĕре ачасене аван. Унта вăйă, унта кулă.

Яслĕре няня.

*Ачасем яслĕре.*



# Оо

у-рок пе-ро пи-о-нер

урок перо пионер

## Урок.

Урок пуçланчĕ. Ачасем класра лараççĕ. Пĕрремĕш урокра вĕсем шутларĕç. Иккĕмĕш урокра вуларĕç. Картина турĕç, сăрларĕç. Переменăра вылярĕç. Унтан çырма тытăнчĕç.

Пурте лайăх çыраççĕ. Пĕр саспаллите сиктермеççĕ.

*О о*

*Оля перо илнĕ.*

# З з



**зво-нок** **звонок**

## Колхозăн.

Пирĕн колхозăн улмуççи сачĕ тата çырла сачĕ пур.

Колхозăн тырă тулăх. Унăн машинăсем нумай.

Колхозăн лашисем те паха. Унта тата ăратлă сыснасем, ĕнесем пур.

*з з З*

*Колхозăн тырă тулăх.*



# Юю

Ю-рий

Ю-ля

| | | |
|---|---|---|
| ю-рă | юр | юл-таш |
| ю-мах | ют | ка-ю |
| ю-ман | юс | хă-ю |

## Юрий.

Юрий пионер. Оля пионерка. Оляпа Юрий шкула каяççĕ. Шкулта вĕсем кĕнеке вулаççĕ, шутлаççĕ, çыраççĕ, юрăсем юрлаççĕ.

Юрий юрăсем юрларĕ. Оля сăвă каларĕ.

| | |
|---|---|
| А-нюк | И-люш |
| Ва-нюк | Па-люк |

*ю Ю Юрий юрă юрларĕ.*



# Ь

су-пăнь мă-кăнь

| | | |
|---|---|---|
| су-пăнь | Ал-тюк | ву-лать |
| мă-кăнь | Ва-нюк | çы-рать |
| халь | Са-нюк | юр-лать |

## Супăнь.

Ванюка амăшĕ супăнь илсе панă. Вăл питне те майне те супăньпе çунă. Унăн пичĕ те, майĕ те, аллисем те тап-таса пулнă.



## Мăкăнь.

Мăкăнь çеçки çурăлсан,
килет пахча илемĕ.
Мăкăнь çеçки тăкăнсан,
каять пахча илемĕ.





| | | | |
|---|---|---|---|
| На-тюк | ти-ха | у-тать | çи-ет |
| Та-тюк | ти-лĕ | чу-пать | си-сет |
| Хве-тюк | ты-лă | тур-тать | сĕ-нет |



## Тихасем.

Колхозăн тихасем нумай.

Тихасене Хветюк пăхать. Вăл тихасене апат парать, шăварать, хырчăкласа тасатать.

Тихасем Хветюка палласçĕ. Ăна курсанах кĕçенеççĕ.

*Хветюк тихасене аван пăхать.*



## Кĕркунне.

Ăшă çу иртрĕ. Сивĕ кĕр çитрĕ. Кăвак пĕлĕт хупланчĕ. Хĕвел тарса пытанчĕ. Çеçен хир çаралчĕ.

Йĕри-тавра пылчăк. Кайăксем кăнтăр енне вĕçсе кайрĕç.

---

**Хир илемĕ каять,**
**сĕм вăрман çаралать.**
**Пĕрмай çумăр çăвать...**
**Вăл хăçан пулать?**





## Хĕл çывхарать.

Çанталăк сивĕтрĕ. Çĕр вăрăмланчĕ. Сайра хутра юр çукалать. Çие ăшă тумтир, пуçа çĕлĕк тăхăнма лекет.

Çырмари пĕвесем пăрланса ларчĕç.
Юр çăвать, çĕр шуралать.
Хĕл çывхарать.

Хирсенче юр анчах.
Çырмара пăр анчах.
Сивĕтет аванах.
Вăл хăçан пулать?

Лапка-лапка юр çăвать,
мулкач сикет—йĕр тăвать.

*Хĕл çывхарать.*



кĕ-тӳ ӳп-ре **Ӳӳ**

кĕтӳ сӳ-ре

## К ĕ т ӳ.

Пирĕн колхозăн ĕне кĕтĕвĕ пысăк. Çула ĕнесем вăрманта е улăхра çӳреççĕ. Шăрăх вăхăтра ĕнесене пăван аптăрататать. Ун чухне ĕнесене киле хăваласа килеççĕ.




| | | |
|---|---|---|
| сӳ-ре | çӳ-хе | сӳс |
| хӳ-ре | çӳ-çе | сӳç |





## Пӳрт.

Иванпа Петĕр хăма татăкĕсенчен пӳрт тунă. Пӳрчĕн алăкĕ те чӳречи те пулнă.

Шала вĕсем сĕтел туса лартнă. Вĕсем ăна юлташĕсене кăтартнă. Пурте савăннă.

## Юрă.

Касрăм, касрăм вĕрене.
Турăм, турăм пĕрене.
Лартрăм, лартрăм шурă пӳрт.
Шурă пӳртре шур сĕтел.
Сĕтел çинче шур кулач.

---

**Колхоз пӳлми хĕлле те çула та тулли.**





## Ферма.

Фф

**Пирĕн колхозăн ферма пур. Унта ăратлă сыснасем пит нумай.**

**Фермăри сыснасем самăр.**
**Вĕсен çурисем шап-шурă.**
**Фермăн хапхи çине:**
**Ферма** тесе çырнă.




Те-ле-фон. Те-ле-граф.





# Дд

## Радио.

Колхозра радио, шкулта та радио. Пирĕн килте те радио пур.

---

Юрăсем юрласа кăтартать, çĕнĕ хыпарсем пĕлтерет.

Мĕн вăл?

тет-радь
тетрадь

радио

у-дар-ник
ударник

*Шкулта радио пур*

# Б б



ра-бо-чи
рабочи

## Рабочисем.

Акă завод. Унта рабочисем ĕçлеççĕ. Унта мĕн чухлĕ рабочи! Арçынсем, хĕрарăмсем—пурте пĕрле ĕçлеççĕ.

## Колхоз.

Колхозра колхозниксем ĕçлеççĕ.

Заводра рабочисем ĕçлеççĕ.



Рабочисемпе колхозниксем çирĕп çыхăну тытаççĕ.





ав-то-бус

автобус

## Автобус.

Автобусĕ пĕр хашкарĕ,
пĕр вĕçтерчĕ çивĕччĕн.
Хула юлчĕ хыçала,
сăртсем хыçне пытанчĕ.

## Автомобиль.

Автобуспа автомобиль лашасăрах чупаççĕ. Автомобиль çине те, автобус çине те çынсем ларса çӳреççĕ.

автомобиль

шофер







# Гг

## Грузовик.

Тавар турттармалли автомобиле грузовик теҫҫӗ. Грузовик—машина.

Грузовик ҫине тавар нумай тиеме пулать. Халӗ колхозсенче те грузовиксем пур.

Пирӗн колхоз кӑҫал ҫӗнӗ грузовик туянчӗ.

| | |
|---|---|
| бригада | килограмм |
| бригадир | грузовик |

Гг

Грузовик-машина.



# Жж

де-жур-ный
жур-нал
э-та-жер-ка

Класра пирĕн дежурный пур. Вăл класри йĕркене асăрхать.

Эпир ăна итлетпĕр. Вăл хушнине тăватпăр.

Черетпе эпир пурте дежурный пулатпăр. Класс доскине тасататпăр. Урок пĕтсен яланах форточка уçса хуратпăр.

Паян Павăл дежурный. Жж

Паян Павăл
дежурный.



## Пирĕн ăмăрту.

Эпир иккĕмĕш класра вĕренекен ачасемпе ăмăрту турăмăр.

Шкула кун сиктермесĕр çӳретпĕр. Кĕнекесене, тетрадьсене тирпейлĕ тытатпăр. Уроксене яланах аван вĕренсе пыратпăр.

## Ударник пулар.

Заводра ударник.
Колхозра ударник.
Шкулта та ударник.
Пурте ударник пулар!

---

Чи лайăх вĕренекен ачасене **отличник** теççĕ.

Пурте отличник пулма тăрăшар!

# Ъъ




объ-яв-ле-ни
объявлени

## Объявлени.

Пирĕн шкулта вĕренекен ачасен ашшĕ-амăшĕсен собранийĕ пулчĕ. Собрани пуласси çинчен эпир аттеаннесене малтанах пĕлтертĕмĕр. Тата пирĕн учитель шкул умне объявлени çырса çапрĕ.

Собрание аван пуçтарăнчĕç. Учитель шкул ĕçĕсем çинчен каларĕ. Тата В а н я ашшĕ колхозниксем съезда кайса килни çинчен каласа пачĕ.



| | | |
|---|---|---|
| съезд | объявлени | учитель |
| çемье | октябрь | учительница |





ре-во-лю-ци | циф-ра
революци | цифра

# Цц

## Октябрь революцийӗ.

Октябрь уявӗ ҫитрӗ. Урам тулли ҫын утать. Эпир те хӗрлӗ ялав илтӗмӗр те урама тухрӑмӑр. Юрӑсем юрласа урам тӑрӑх утрӑмӑр.

Урамра митинг пулчӗ. Унтан клуба кайрӑмӑр. Унта кино куртӑмӑр.

**Октябрь революцийӗ сывӑ пултӑр!**

*Цц Цц цифра.*



## Владимир Ильич Ленин.

Владимир Ильич Ленин пӗтӗм ӗҫхалӑхӗн **ҫулпуҫӗ**, аслӑ вӗрентекенӗ, ҫывӑх тусӗ пулнӑ. Эпир Ленин вӗрентнӗ пек пурӑнатпӑр. Ленин кӑтартса хӑварнине тӑватпӑр.





## Иосиф Виссарионович Сталин.

Сталин пӗтӗм ӗҫхалӑхне Ленин кӑтартса хӑварнӑ ҫулпа ертсе пырать.

Сталин — коммунистсен партин ҫулпуҫӗ.

Сталин — пӗтӗм ӗҫхалӑхӗн ҫулпуҫӗ.

Сывӑ пултӑр Сталин юлташ!

*Сталин.*

## Мамлакат.

Мамлакат — хĕрача. Вăл пурăнакан çĕршывра уйсенче çĕрмамăкĕ акса ӳстереççĕ.



Çĕрмамăк пухнă чухне Мамлакат пуринчен те авантарах ĕçленĕ. Çĕрмамăкне вăл хăрах алăпа мар, икĕ алăпа харăс пуçтарнă.

Çапла вăл пуринчен те ытларах çĕрмамăк пухнă. Çавăншăн ăна пирĕн правительство чи чаплă орден — Ленин орденĕ панă. Тата Сталин юлташ ăна сехет парса парнеленĕ.

Мамлакат шкулта вĕренет. Вăл отличница.

## Пионер юрри.

**Танкăр-танкăр танкăртатрĕ**
**параппан сасси.**
**Ян-янах янрарĕ**
**пионер сасси.**



В. М. Молотов.



М. И. Калинин.

## Хӗрӳллӗ ӗҫ.

Ҫӗршыв хӗрсе ӗҫлет,
ӗҫре ҫӗршыв вӗрет.
Мӑн заводсем тӑватпӑр.
Мӑн ҫурт-йӗрсем лартатпӑр.
Ӗҫхалӑхӗ ӗҫре,
пур ҫамрӑк вӗренӳре.

## Савӑнӑҫлӑ пурӑнӑҫ.

Хӗпӗртесе савӑнса пурӑнатпӑр эпир, Совет ҫӗршывӗнчи ачасем.

Кам пирӗн пурӑнӑҫа савӑнӑҫлӑ турӗ?

Пирӗн ҫӗршыва кам телейлӗ турӗ?

Большевиксен партийӗ—Ленинпа Сталин партийӗ.



К. Е. Ворошилов.

## Хӗрлӗ Ҫар—пирӗн вӑй.

Пире вӑрҫӑ кирлӗ мар.
Ӗҫхалӑхшӗн вӑрҫӑ—шар.
Анчах ҫӑткӑн тӑшмансем
пирӗн ҫине килесрен
хатӗр тӑрать Хӗрлӗ Ҫар—
пире сыхлать яланах.





## Пограничник.

Сивӗ хӗл. Тӗттӗм каҫ.
Сас-чӗв ҫук таврара.
Пограничник тӑрать
хуралта.
Унӑн витӗр кураҫ
куҫӗсем тӑшмана.

Вӑл кӳртмест ҫӗршыва никама.
Каҫӑн-ирӗн тӑрать ик тӗнче
хушшинче.
Вӑл сыхлать Советсен ҫӗршывне.

Пире тӑшман хӑрушӑ мар,
сыхӑ тӑрать Хӗрлӗ Ҫар.

**Сывӑ пултӑр Хӗрлӗ Ҫар!**

*Сывӑ пултӑр Хӗрлӗ*
*Ҫар!*

# Ёё

ёл-ка | лёт-чик
ёлка | лётчик



## Лётчик.

Костя шкулта питĕ тăрăшса вĕреннĕ. Вăл отличник пулнă. Переменăсенче Костя ытти ачасемпе пĕрле вăрçă вăййисем вылянă. Килте, уроксем вĕренсе хатĕрлесен, самолётсем тунă.

Костя лётчиксен шкулне вĕренме кĕнĕ. Халĕ вăл пысăк самолётпа вĕçет.

Костя—лётчик. Вăл хамăр çĕршыва тăшмансенчен сыхлать.








# Щ щ

| | |
|---|---|
| щёт-ка | плащ |
| щётка | роща |

## Тухтăр пăхни.

Паян пире тухтăр пăхрĕ. Вăл манăн кăкăра итлерĕ. Куçа тата шăла-çăвара пăхрĕ.

— Сывă! Анчах шăла таса тытмалла. Кашни кун ирхине тата каçхине шăла щёткăпа тасатмалла,—терĕ.

Апат çинĕ хыççăн вăл мана яланах шăлсене таса шывпа чӳхеме хушрĕ.

*Щ щ*

*Шăла щёткăпа тасатмалла.*

# Алфавит.

Аа Ӑӑ Бб Вв Гг

*Аа Ӑӑ Бб Вв Гг*

Дд Ееё Ӗӗ Жж Зз

*Дд Ееё Ӗӗ Жж Зз*

Ии Йй Кк Лл Мм

*Ии Йй Кк Лл Мм*

Нн Оо Пп Рр Сс

*Нн Оо Пп Рр Сс*

Ҫҫ Тт Уу Ӳӳ Фф

*Ҫҫ Тт Уу Ӳӳ Фф*

Хх Цц Чч Шш Щщ

*Хх Цц Чч Шш Щщ*

ъ Ыы ь Ээ Юю Яя

*ъ Ыы ь Ээ Юю Яя*




## Октябрь ачисем.

Эх, хастарлăн-çке утатпăр
Эпир, октябрь ачисем.
Пит патмарăн халь ÿсетпĕр
çĕнĕ пурăнăç калчисем.
Килĕр, килĕр, пурте килĕр
октябрятсен ĕретне!
Пурте хĕрлĕ çăлтăр илĕр,
Пурте килĕр вĕренме.



## Пирĕн çемье.

Манăн атте коммунист,
анне коммунистка.
Манăн пичче пионер,
аппа комсомолка.
Эпĕ октябрĕнок.

## Наçтюк.

Наçтюк шкултан вĕренсе киле таврăннă. Килĕнче аслашшĕ анчах пулнă. Наçтюк сĕтел хушшине ларнă. Вăл аслашшĕне кĕнеке вуласа панă. Унтан сăвă каланă. Аслашшĕ савăнса итлесе ларнă.



## Ĕç эрни.

Эрнере çичĕ кун.Ултă кун шкулта вĕренетпĕр. Пĕр кун килте канатпăр.

## Кун ячĕсем.

Тунтикун. Ытларикун. Юнкун. Кĕçнерникун. Эрнекун. Шăматкун. Вырсарникун.

## Алтюк.

Алтюк ир те каç та çăвăнать. Уйрăм алшăллипе шăлăнать.

Алтюк уйрăм чашăкран апат çиет. Апат çинĕ хыççăн вăл яланах çăварне чӳхет.



## Чĕрĕп.

Ачасем курăк ăшĕнче чĕрĕп тупнă. Вĕсем ăна киле илсе каясшăн пулнă. Анчах ăна ниепле йăтма май пулман. Чĕрĕпĕн йĕпписем чикнĕ. Вара ачасем ăна çĕлĕк ăшне хунă та шкула илсе пырса чĕрчун кĕтессине янă. Вĕсем ăна апат тата шыв панă.



## Улай.

— Улай, эсĕ ăста çӳрерĕн, кала-ха?

— Эпĕ хирте кĕтӳ пăхса çӳрерĕм. Ĕнесемпе сурăхсене сыхларăм.

— Халь киле чупса килтĕм. Сана курнипе хĕпĕртесе тăратăп.

## Хурӑн.

**Хурӑн çулçи сарӑлсан,**
**килет вӑрман илемӗ.**
**Хурӑн çулçи тӑкӑнсан.**
**каять вӑрман илемӗ.**



## Кӗрхи вӑрман.

Кӗркунне Миша ашшӗпе вӑрмана кайнӑ. Вӑрманта



йывӑç çулçисем те, курӑксем те сарӑхнӑ. Çырла, кӑмпа, мӑйӑр, йӗкел — нимӗн те юлман. Кайӑксен юрри те илтӗнмен. Вӗсем ӑшӑ енне, хӗл пулман çӗре, вӗçсе кайнӑ.



## Нăрă.

Çула эпир ачасемпе вăрмана кайрăмăр. Унта йывăç çулçисем, куракксем пухрăмăр. Лĕпĕшсем тытрăмăр. Пĕр шăрчăк тата нăрă тытрăмăр.

Нăрăпа шăрчăка пĕр спичка коробки ăшне хутăмăр. Киле çитсен коробкăна уçса пăхрăмăр та, унта пĕр нăрă анчах юлнă. Шăрчăкăн пуçĕ тата çунатти юлашкисем çех юлнă.

Шăрчăка нăрă çисе янă.

## Кушак.

Кушак пӳрт тăррине улăхрĕ. Вăл урисене хутлатса выртрĕ те çывăрса кайрĕ. Çерçи вĕçсе пычĕ те ун патне ларчĕ.



— Ан лар унта çерçи! Темĕн курăн. Кушаксем пит чее вĕсем.



## Шапасем.

Ачасем пĕве хĕрринче выляна. Вĕсем шапасем ларнине курна. Ачасем вĕтĕ чулсем пуçтарна та шапасене чулпа пере пуçлана.

Пĕр шапи кăшт пуçне кăларчĕ тет те ачасене каларĕ, тет:

— Чарăнăр, ачасем, ан перĕр! Сире вăййă та, пире вилĕм,—терĕ тет.

## Кăвакал.



—Нарт-нарт
кăвакал,
ăçта каян
кăвакал?

— Мăн шыв хĕрне каятăп.
— Шыв хĕрринче мĕскер пур?
— Унта манăн йăва пур.
— Сан йăвара мĕскер пур?
— Унта манăн чĕпсем пур.

## Мулкач çурисем.

Çула пулнă. Семён пичче колхоз хурĕсене пăхса çӳренĕ.



Сасартăк вăл курăк ăшĕнче тем мĕшĕлтетнине курать. Çывăхарах пырса пăхать те мулкач çури курах каfive. Семён пичче ăна хăйĕн сăхманĕпе лап! витсе хурать.

Вара вăл мулкач çурине тытать те киле илсе килет.

## Коля аэроплан курни.

Çуркунне пулнă. Юр ирĕлнĕ. Урамра шыв юхнă. Коля шыв тăрăх кимĕ юхтарнă.

Сасартăк çӳлте темĕскер кĕрленĕ сасă илтĕннĕ. Коля пуçне çĕклесе çӳлелле пăхнă та ун тĕлнелле пĕр пысăк кайăк пекскер вĕçсе пынине курах кайнă. Вăл аэроплан пулнă. Коля аэроплан çине тĕлĕнсе пăхса тăнă. Çав вăхăтра унăн кимми юхнă кайнă.



Кайăк мар—пĕлĕте çитиччен улăхать. Çынсем лартса вĕçтерет, ывăнма пĕлмест.

*Мĕн вăл?* (Аэроплан).



## Поезд.

Рельсăсем янăраççĕ,
рельсăсем чанкăртатаççĕ.
Поезд çил пек ыткăнать,
поезд малаллах вăскать.

Станцăна ак çывхаратпăр,
станцăна çитсе тăратпăр.
Анăр, камăн анмалла,
пирĕн инçе каймалла.

---

Поездпа çынсем те ларса çӳреççĕ, тавар та турттараççĕ.



## Ӑпар чӑхӑпа чӗпписем.

Кӑлӑк! кӑлӑк! Кӑлӑк-кӑлӑк—тесе ҫӳрет ӑпар чӑхӑ килхушшинче.

— Шип-шип-шип! — шип-шип-шип—туса утаҫҫӗ ун хыҫӗнчен чӗпписем.

Ӑпар чӑхӑ навус купи тӗлне ҫитрӗ те ачисем валли хурт-кӑпшанкӑ тупас тесе чавалама пуҫларӗ. Сирпӗтет те сирпӗтет урисемпе навуса. Ҫапла чаваланса шалт вараланса пӗтрӗ.

Пӑхаҫҫӗ пӗчӗкҫӗ чӗпписем—хӑйсен амӑшне хӑйсем те паллаймаҫҫӗ.

— Шип-шип, шип-шип, ӑҫта кайрӗ пирӗн анне, ӑҫта кайрӗ пирӗн анне?—хӑраса ӳкрӗ чи пӗчӗк чӗппи.

— Шип-шип, ак кунта, шип-шип, ак кунта! — тет пысăкраххи, килхушши варринче выртакан тимĕр кăмака труби ăшне кĕрсе кайса. Кун хыççăн пур чĕпĕсем те амăшне шыраса хăрăмлă труба ăшне пыра-пыра кĕреççĕ. Пĕр пуçĕнчен сап-сарă



пырса кĕреççĕ те тепĕр пуçĕнчен хуп-хура пулса тухаççĕ.

Чăпар чăхă навус ăшĕнчен пĕр ăман чаваласа кăларчĕ. Чĕпписене йыхăрма пуçларĕ:

— Кăт-кăт-кăт, чĕппĕмсем! Кăт-кăт-кăт, чĕппĕмсем! — тесе йыхăрать.

Чĕпписем чупса çитеççĕ, анчах амăшĕ хăй чĕпписене хăй паллаймасть.

— Ăҫта ҫухалчĕҫ ман чĕппĕмсем? —тесе тĕлĕнет.

Ҫак самантра ҫăмăр ҫуса ячĕ те, чăпар чăххăн чĕпписем каллех сар ука пек пулса тăчĕҫ. Чăпар чăхă вĕсене хăйĕн ҫунаттисем айне пухса лартрĕ.

---



## Чĕкеҫсем.

Пÿрт карнизĕ айĕнче чĕкеҫ йăви пулнă. Чĕкеҫĕн сарă сăмсаллă чĕпписем йăвара пуҫĕсене илемлĕн кăтартса ларнă.

Пĕрре пĕр чĕппи йăваран тухнă ÿкнĕ. Чĕкеҫсем ун тавра хурлăхлăн ҫуйăхса вĕҫсе ҫÿренĕ.

Вăл вăхăтра Петя урампа иртсе пынă. Петя чĕкеҫ чĕппине илнĕ те йăвине хунă.

Чĕкеҫсем савăнăҫлăн чĕвĕлтетме пуҫланă.

# Кушакпа çерçи.

Çерçи йывăç çинче ларнă. Йывăç айĕнче кушак ларнă. Кушак çерçие калать:

— Вĕççе ан-ха ман пата, пĕрле выльăпăр,—тет.

Çерçи калать:

— Кушак, эсĕ малтан хăвăн туту çумне тĕк ăçтан çыпăçнине калаха!—тет.



Кушак ăна калать:

—Эпĕ халĕ тин ирхи апат çирĕм, —тет.

Çерçи калать:

— Мана кăнтăрлахи апат туса çиесшĕн-и мĕн эсĕ? Çук, эпĕ—вată çерçи, сирĕн пеккисене аван пĕлетĕп. Мана улталаймăн,—тет.



## Тăвайкки ярăнни.

Эх, тăвайкки, тăвайкки,
мĕн чул ача ярăнать!
Çуна, йĕлтĕр, е коньки
тăвайккине якатать.
Алăсем шăнса кӳтни
ачасене ним те мар.
Кулса кăна ярăнар,
çав вăл хĕлле савăнни.

## Урама чĕнни.

Атя, Ванюк урама,
унта сана кĕтеççĕ.
Миша, Анна, Хĕветле
вылямашкăн чĕнеççĕ.

## Йӗр тӑрӑх.

Петя хӑйӗн аслашшӗпе пӗрле вӑрмана кайнӑ. Юр тин çеç çунӑ пулнӑ.

— Петя, кунта нумай кайӑксем çӳреççӗ мӗн,—тет аслашшӗ. Петя пӑхать—нимӗнле кайӑк та курмасть.

— Асатте, кайӑксем çук-çке,—тет вӑл.



— Эпӗ йӗр тӑрӑх куратӑп,—тет аслашшӗ.—Акӑ кӗске хӳре сиксе кайнӑ. Акӑ тилӗ йӗрӗ. Акӑ кашкӑр çул урлӑ каçса кайнӑ.

## Упапа старик.

Упа старикпе туслашнӑ. Вӗсем иккӗшӗ пӗрле çарӑк акма шут тытнӑ. Старик упана калать:

— Мана тымарри, сана тăрри пултăр,—тет.

— Юрĕ,—тет упа.

Акă çарăкĕ пулса çитрĕ. Старик çарăкне илчĕ. Упана çеçки лекрĕ. Ӳпкелешрĕ упа, анчах ним тума та çук.



Тепĕр çулĕнче старик упана калать:

— Атя каллех иккĕн пĕрле акăпăр,—тет.

— Юрать,—тет упа.—Анчах эсĕ халь тăррине ил, мана тымарне пар,—тет.

— Юрĕ. Эсĕ каланă пек пултăр,—тет старик.

Акрĕç вĕсем тулă. Тулли питĕ аван пулнă. Старик тăррине илнĕ, упана хăмăлĕ лекнĕ.

Çавăнтан вара упапа старикĕн туслашу пĕтнĕ, тет.



## У п а.

Элĕ упа—утаман,
ик урапа утакан,
пур кайăкран хытăрах
мĕкĕрттерсе улакан.

Çăва тухсан—вăрманта
вĕллесене ватакан.
Тутлă пылне çиекен,
ĕнесене тытакан.

Усал сивĕрен хăраса
хĕлĕпеле шăтăкра,
ура тупань çуласа,
вилнĕ пекех çывратăп.

Çуркунне тин вăранап,
тинех çисе тăранап.
Вара сиксе ташлатăп,
йăкăш-якăш шăватăп.

## Юр кĕлетке.

Хĕл çитнĕ. Юр çуса лартнă. Сантаăк сивех пулман. Ачасем юртан



çын кĕлетки тунă. Куçĕсене кăмрăкран тунă. Кĕлеткен аллисем те пулнă. Кĕлеткен аллине шăпăр тыттарнă.



## Ёлка.

Уйрăмăнах тÿрĕ ÿссе ларнă вăрман варринче пĕчĕк чăрăш. Çамрăклах вăл сивве тÿснĕ. Çил-тăвăл та пайтах курнă.

Хĕлле чăрăша касса кайнă. Ăна шкула илсе пынă. Тĕрлĕ тĕслĕ хутсемпе илемлетсе ёлка тунă.

Ёлка тавра ачасем çавăрăнаççĕ, юрлаççĕ, алă çупса ташлаççĕ, илемлĕ сăвăсем калаççĕ.

Редактор С. П. Ягунов. Техредактор Ф. Яковлев.

Послано в производство 21-V—39 г. Подп. к печ. 17-VIII—39 г. Ф. 6. 60×92 1/16. Печ. лис.—5,25. Тираж 40 000 экз. Заказ № 349. Уп. Чувашглавлита № 1390.

Типография № 1 Наркомместпрома ЧАССР, г. Чебоксары, Дом Печати.

Хакě 60 пус.

А. ТРОФИМОВ.

# БУКВАРЬ

Госиздат ЧАССР — 1939